Муркаш район хаçачĕ

# Çĕнтерÿ ялавĕ

1944 çулхи майăн 5-мĕшĕнчене тухать

58 (7483) № ✻ Юн кун, 2007 çулхи июлĕн (утă) 18-мĕшĕ ✻ Хакĕ ирĕклĕ

**Симĕс ĕç çи – 2007**

## “Выльăх апачĕ хатĕрлесси тĕп вырăнта”,–

терĕç иртен пуçласа каçчен нумай çул ÿсекен курăксене силос валли çулакан тата çулнă массăна траншейăна турттаракан механизаторсемпе водительсем не пытармасăрах палăртать.

– Хăвăрт аталанма пĕтĕм технологие алла илсе çитереймерĕмĕр-ха. Çавна кура тĕллĕн-тĕллĕн экономика



**Агрофирма ертÿçи Н. Пихтеров выльăх апачĕ хатĕрлес тапхăр ответлăхне ăнланса хирте ĕçлекен механизаторсемпе тăтăш калаçусем ирттерет.**



**Пĕр прицеп хыççăн тепри симĕс массăпа силос траншейине каять.**

агрофирма ертÿçин шухăшĕпе пĕр пулса.

“Рассвет” агрофирмăна пĕлтĕртенпе Николай Николаевич Пихтеров ертсе пырать те мĕн тунипе хăй хальлĕхе пĕтĕмпех килĕшменнисене те куратпăр. уксахланине те курма пулать, анчах çав çитменлĕхсене пĕтерме май пур çулсене те куратпăр. Ăна пурнăçа кĕртме пирĕн ĕçлекенсем те, техникăсем те, пĕрлехи тĕллев те пур. Акă кăçалхи çур акире 520 гектар çуртрисем, 250 гектар пĕр çул ÿсекен курăксем акса хăвартăмăр. 400 гектар çинчи кĕрхи культурăсем çинчи çум курăкпе тата сă-



**Илья Георгиевич Степанов хуçалăхра 34 çул механизаторта ĕçлет. Çу кунĕсенче вара шурă шăнасем вĕçме пуçличченех выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçре.**

тăрçăсемпе гербицид пулăшăвĕпе кĕрешни паян уйрăмах усăллă пулни курăнать, – ăнлантарчĕ хуçалăхри уй-хир ĕçĕсемпе силослăх симĕс курăк çулакан хире васкană май Николай Николаевич юлашки вăхăтри çумăрсем каю çĕкленме лайăх тĕкĕ пулнине палăртса.

Нумай çул ÿсекен курăксем хуçалăхра 515 гектар йышăнаççĕ. Вĕсенчен 150 гектарне утăлăх çулнă та ĕнтĕ. Ун çинчен 240 тонна утă хатĕрлеме те мехел çитернĕ Мăнсĕнтĕрсем. Паян вара симĕс ĕç çине хутшăнакан пĕтĕм техника силос хывас ĕçре тимлет. Пĕрлехи вăйпа вĕсем çак кунсенче Мăн Тутаркассинчи иккĕмĕш сĕт ферминче 500 тоннăлăх пĕр силос траншейине хупрĕç те ĕç вăйĕ Вомпăкассинчи пĕрремĕш номерлĕ сĕт фермине силос хывма пуçларĕ. Кунта иртен пуçласа каçчен тата çĕрĕпе Николай Буронов экипажĕн МТЗ-1221 тракторĕ симĕс массăна пусăрăнтарать. Траншейăна вара кунĕпех ешĕл масса пырса тăрать. Ăна турттаракансем: Александр Прокопьевпа Владимир Одинцов водительсем (хуçалăхри ĕç стажĕ вĕсен 29 – 22 çул) тата Валерий Киселев, Вячеслав Суворов, Владимир Блинов механизаторсем. Кашниех хăйĕн ĕçне аван пĕлет, уяр кунăн пĕр сехетне те усăсăр çухатмасть. Кунта “Волга-2” агрегатпа курăк çулакан Илья Георгиевич Степанов механизаторăн сăмахĕсем манăн чĕренех пырса тиврĕç.

– Тепĕр 2-3 эрнерен вырмана тухма вăхăт çитет. Унччен вара выльăх апачĕ хатĕрлессипе пĕр кун та çухатас марччĕ тетпĕр. Выльăхчĕрлĕх отраслĕ хуçалăх тĕрекĕ. Ăна вăйлатасси вара пирĕн пĕрлехи тивĕç. Хĕл хырăмĕ тутă пуласси эпир паян епле ĕçленинчен нумай килет. Çакна пирĕн отрядри кашни механизатор ăнланать. Силос хатĕрленипе пĕрлех эпир кунсерен фермăсене 12-шер тонна ешĕл масса турттарса паратпăр. Вăл ĕнесемпе тынасен умĕнчен те, сыснасем патĕнчен те самантлăха та татăлмасть, – терĕ хастар механизатор калаçса тăма вăхăт çуккине палăртса кабинăна кĕрсе ларнă май.

Нумай çул ÿсекен курăксен лаптăкĕ пуррине тата нÿрĕке пăхса каю çĕкленме пуçланине кура Мăнсĕнтĕрсем хĕл валли выльăх апачĕ хатĕрлес плана пурнăçласса шанаççĕ. Çак шанăçпа куллен ĕçе тухаççĕ.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Автор сăн ÿкерчĕкĕсем.**

**Выльăх апачĕ ытларах пултăр**

### Районти пĕрлешÿллĕ хуçалăхсенче июлĕн 17-мĕшĕ тĕлне выльăх апачĕ хатĕрлес ĕçсем епле пынине кăтартни

**Колонкăсенче: 1.Нумай çул ÿсекен курăксене çулнă 2. Утă хатĕрленĕ. 3. Сенаж хывнă. 4. Силос хывнă (процентпа).**

| | 1 | 2 | 3 | 4 |
|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 63 | 58 | 37 | |
| “Волга” | 69 | 63 | 44 | – |
| “Восток” | 83 | 87 | – | 36 |
| “Герой” | 87 | 52 | – | 62 |
| К. Иванов яч. хис. | 9 | 6 | – | – |
| Ильич яч. хис. | 100 | 28 | 127 | – |
| Ленин яч. хис. | 58 | 15 | – | – |
| “Лидер” | 56 | 15 | – | – |
| “Оринино” | 88 | 51 | – | 87 |
| “Передовик” | 33 | 22 | – | – |
| “Свобода” | 73 | 32 | 35 | – |
| “Сеятель” | 98 | 107 | – | – |
| Суворов яч. хис. | 42 | 37 | 55 | – |
| “Рассвет” | 43 | 41 | – | 17 |
| “Ударник” | 71 | 73 | – | 48 |
| Чапаев яч. хис. | 66 | 25 | 45 | – |
| “Чемеево” | 57 | 37 | – | 23 |
| Чкалов яч. хис. | 100 | 49 | – | – |
| **РАЙОНĔПЕ** | **55** | **41** | **29** | **32** |

***“ВТМ” чикĕллĕ яваплăхлă обществăра 25 тонна, “Моргаушская” чăх-чĕп фабрикинче 5 тонна витаминлă курăк çăнăхĕ хатĕрленĕ.***

***Ĕнен сĕчĕ чĕлхи çинче тенĕрен. Июлĕн 17 - мĕшĕ тĕлне районта пĕр ĕне пуçне вăтамран 11,8 килограмм сĕт сунă. Ку вăл пĕлтĕрхи кăтартуран 1,6 килограмм сахалрах. Çав вăхăтрах “Герой”, Ильич яч. хис., “Ударник”, Чкалов яч. хис. хуçалăхсенче паян ытларах сĕт сăваççĕ.***

**Ĕçре пултаруллисем**

## Йĕркелĕх хуралĕнче



***Емельян Алексеевич Пугачев милици майорĕ районта шалти ĕçсен пайĕнче 1991 çултанпа ĕçлет. Халĕ вара вăл Катькас ял тăрăхĕнчи участокри милиционер пулса тăрăшать.***

***Милици ĕçĕнче пысăк опыт пухма ĕлкĕрнĕскер, чылай çамрăк сотрудника йывăр ĕçпе паллаштарнă, ĕçре пулăшса пынă. Нумаях та вăхăт иртмерĕ, вăл кăкăр çине çакмалли паллăна тивĕçрĕ, унăн тăрăшулăхне ытти Тав хучĕсем те çирĕплетеççĕ. Ĕçе тулли кăмăлпа пурнăçланăран милици сотрудникĕ коллективра пысăк хисепре.***

***Сăн ÿкерчĕкре: Е.А. Пугачев.***

**Республикăра**

## Çул-йĕр тума Тĕнче банкĕ пулăшĕ

Чăваш Республикин Финанс министерствинче “Çул-йĕр тăвас тата ăна çĕнетес программăна йĕркелес, укçа-тенкĕпе тивĕçтерес енĕпе Чăваш Енре пухнă опыт” темăпа иртнĕ семинара премьер-министр тивĕçĕсене пурнăçлакан Н.В. Смирнов, Чăваш Республикин Министрсен Кабинечĕн Председателĕн çумĕ – хула строительствин тата общество инфратытăмĕн аталанăвĕн министрĕ А.Н. Гончаров, Мордва тата Мари Эл республикисен финанс министрĕсем Н.В. Петрушкинпа Е.Д. Рыжаков, Пĕтĕм тĕнчери банкăн финанс корпорацийĕн (МФК) представителĕсем Е.А. Бургунская, Н. Куреши тата ытти официаллă çынсем хутшăннă. Калаçу Чăваш Республикин Президенчĕ Н.В. Федоров пĕлтĕр республикăри пур яла та асфальт сарнă е хытарнă çулпа çыхăнтарас тĕлĕшпе йышăннă анлă программа тавра пынă. Асăннă программăна пурнăçлама пĕлтĕрех 1 миллиард тенкĕ хывнă.

Виçĕ çуллăх бюджетпа килĕшÿллĕн, 2008-2010 çулсенче çак тĕллевпе республика бюджетĕнчен 7,8 миллиард тенкĕ уйăрĕç. Кунсăр пуçне хушма инвестицисене явăçтарма палăртаççĕ. Пĕтĕм тĕнчери банкăн инвестици уйрăмĕ программăн пĕрремĕш тапхăрĕ валли 1,3 миллиард тенкĕ уйăрма йышăннă та ĕнтĕ. Кăçал ялсенче 400 çухрăм çул хута каймалла, çавăн пекех 150 çухрăм анлă çулпа кĕперсене юсĕç.

Пĕрремĕш вице-премьер – финанс министрĕ Н.В. Смирнов палăртнă тăрăх, çул-йĕр хуçалăхне йĕркелес çĕрте тĕнче шайне çитни республикăшăн пĕлтерĕшлĕ: “Пирĕн туслă ĕç хутшăнăвĕсем 2006-2010 çулсенче автомобиль çул-йĕрне тумалли программăна пурнăçлама çĕнĕ инвестицисем тупма пулăшĕç...”

**«Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту»**

### Ыйтусене ЧР Патшалăх Канашĕн Председателĕ, «Единая Россия» партин Чăваш Республикинчи уйрăмĕн ертÿçи М.А. Михайловский хуравлать

**ЫЙТУ: Иккĕмĕш ушкăн инваличĕ пулнă май эпĕ автомашина илме черетре тăратăп. 83 çулта эпĕ. Автомашина илессине хăвăртлатма е ун вырăнне укçан компенсаци илме май çук-ши?**

**И.Н. ГРИШИН, Аслă Отечественнăй вăрçă ветеранĕ. Муркаш районĕнчи Ярославка ялĕ.**

**ХУРАВ:** Аслă Отечественнăй вăрçă инваличĕсене «Ока» автомашинăпа черете кура тивĕçтереççĕ. Автомашина вырăнне укçан компенсаци парассине пăхса хуман.

**ЫЙТУ: Эпир мăшăрпа пĕрле хамăрăн хваттере хĕрĕмĕре парнелерĕмĕр. Унăн хваттершĕн налук тÿлемелле-и?**

**М.П. ЛУКОЯНОВА. Шупашкар хули.**

**ХУРАВ:** Пур граждансем те налуксемпе тÿлевсене вăхăтра тÿлесе тăма тивĕç. Сирĕн хĕрĕн харпăрлăхра хваттер пур, апла пулсан вăл пурлăх налукне тÿлеме тивĕç.

**ЫЙТУ: Эпĕ приватизаци туман хваттерте пурăнатăп. Кивĕ пăрăхсене çĕннисемпе улăштарма ыйтма манăн право пур-и?**

**Г.М. БАРАБАНОВА. Шупашкар хули.**

**ХУРАВ:** Пăрăхсене улăштарасси капиталлă юсав ĕçĕсен шутне кĕрет. Социаллă найм килĕшĕвĕпе панă пурăнмалли çурт-йĕрте ку юсав ĕçĕсене наймодатель туса ирттерме тивĕç. Енчен те капиталлă юсав ĕçĕсене вăхăтра туса ирттермеççĕ пулсан, эсир пурăннăшăн тÿлемелли виçене чакарма е çитменлĕхсене пĕтерме кайнă тăкаксене пĕтернĕшĕн саплаштарма укçа-тенкĕ ыйтма пултаратăр.

**ЫЙТУ: Çĕр участокне эпĕ уйрăм харпăрлăха куçарнă пулсан, манăн сад кооперативĕн председательне çĕр налукĕ тÿлемелле-и?**

**З.И. АРТЕМЬЕВА. Шупашкар хули.**

**ХУРАВ:** Сад кооперативĕн председателĕ çĕршĕн укçа ыйтма пултараймасть. Анчах та ытти пур тÿлевсене те – шывпа, электричествăпа усă курнăшăн, член взносĕсене – тÿлесе тăрас пулать.

**Хисеплĕ вулакансем! Сирĕнтен ыйтусене çак адреспа кĕтеççĕ: 428000, Шупашкар хули, Николаев урамĕ, 4-мĕш çурт, «Радио çурчĕ». «Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту» («Важный вопрос») тесе паллă тумалла.**

**Аса илтеретпĕр: «Пысăк пĕлтерĕшлĕ ыйту» передачăна ĕç кунĕсенче «Раççейри радио» тата «Маяк» радио» хумĕсем çинче те итлеме пултаратăр.**

**Юбилей**

### *Саламлатпăр*



Хаклăран та хаклă мăшăрăма, ырă кăмăллă аннене, чунтан юратакан асаннене, Çатракасси ял тăрăхне кĕрекен Ятман ялĕнче пурăнакан **Клавдия Афанасьевна ШАТУНОВАНА** июлĕн 19-мĕшĕнче 70 çул тултарнă ятпа чун-чĕререн саламлатпăр. Малалла та çирĕп сывлăх, телей, килĕшÿ, тату пурнăç, канлĕ ватлăх, вăрăм ĕмĕр сунатпăр.

**Саламлаканĕсем: мăшăрĕ, хĕрĕ, 2 ывăлĕ, кинĕ, мăнукĕсем тата çывăх тăванĕсем.**